28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ИЮЛЬ
20
ЭРНЕКУН
138(6889) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ



Ӗҫсынни депутачӗсен райсовечӗсен исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне ӑнӑҫлӑ тултарнӑшӑн тата выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне ӳстернӗшӗн малта пыракан ҫак колхозсемпе колхозниксене республикӑри ХИСЕП ХӐМИ ҫине кӗртнӗ:

КАЛИНИНО РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

78. **«Правда» колхоз** (председателӗ **Г. П. Прохоров** юлташ, ферма заведующийӗ **Яковлев** юлташ, старши конюх **Романов** юлташ) выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана лашасем енӗпе 100 процент, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑх енӗпе 122 процент, сыснасем енӗпе 120 процент, сурӑхсем енӗпе 145 процент тултарнӑ. Государствӑна ҫулталӑкшӑн аш-какай 86 процент панӑ.

79. Карачура ял Советӗнчи **«Правда» колхоз** (председателӗ **Н. М. Матвеев** юлташ, ферма заведующийӗ **Иванов** юлташ, старши конюх **Григорьева** юлташ) выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана лашасем енӗпе 100 процент, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑх енӗпе 100 процент, сыснасем енӗпе 100 процент, сурӑхсем енӗпе 114 процент тултарнӑ. Ҫулталӑкшӑн аш-какай парса татнӑ.

СӖНТӖРВӐРРИ РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

80. **«Красная Армия» колхоз** (председателӗ **Е. А. Анкудинов** юлташ) выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана лашасем енӗпе 100 процент, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑх енӗпе 112 процент, сыснасем енӗпе 140 процент, сурӑхсем енӗпе 118 процент тултарнӑ. Государствӑна ҫулталӑкшӑн аш-какай 130 процент, сӗт 77 процент, ҫӑмарта 90 процент панӑ.

Аслӑ Ҫӗнтерӳ ячӗпе социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарар!

Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ заводри работниксем Чӑваш республикинчи мӗнпур рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене

ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Аслӑ Сталин ертсе пынипе совет халӑхӗ, Германи милитаризмне ҫапса аркатса, пӗтӗм тӗнчипе паларса тӑракан историллӗ ҫӗнтерӳ турӗ. Хамӑрӑн социализмлӑ Тӑван ҫӗршывӑн чыслӑхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн воинӗсем вӑйя хӗрхенмесӗр кӗрешрӗҫ, тылри ӗҫ ҫыннисем ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлерӗҫ.

Пирӗн заводӑн коллективӗ, пӗтӗм совет халӑхӗ пекех, Отечественнӑй вӑрҫӑ кунӗсенче тӑшмана ҫапса аркатма Хӗрлӗ Ҫара ывӑнма пӗлмесӗр пулӑшса тӑчӗ. Хӗрлӗ Ҫар валли ҫар электротехники парса тӑнӑшӑн пирӗн завод правительствӑн пысӑк наградине—Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденне илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Европӑри вӑрҫӑ тапхӑрӗ вӗҫленчӗ. Ирӗкке кӑларнӑ совет ҫӗрӗ ҫинче хуҫалӑха юсаса ура ҫине тӑратас ӗҫ пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе пулса пырать, халӑх хуҫалӑхӗ малалла аталанать.

Аслӑ Ҫӗнтерӳпе хавхаланса тата Магнитогорскпа Кузнецк комбиначӗсенчи металлургсем чӗнсе калана ответлесе, эпир Чӑваш республикинчи мӗнпур рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене аслӑ Ҫӗнтерӳ ячӗпе социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарса яма чӗнетпӗр, хамӑр ҫине эпир ҫакӑн пек обязательствӑсем илетпӗр:

1. 1945 ҫулхи производство программине срокчен тултармалла тата продукци туса кӑларассине, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, 11 процент чухлӗ ӳстермелле.
2. Сыхланмалли автоматсене йышлӑн туса кӑларас ӗҫе вӗренсе алла илмелле.
3. Пурӑнмалли нумай хваттерлӗ ҫурт, икшер хваттерлӗ 10 ҫурт туса лартмалла тата клуб залне хамӑрӑн вӑйсемпе тумалла.
4. Подсобнӑй хуҫалӑхри тырпулсемпе пахчаҫимӗҫсене кӑтартуллӑн пухса кӗмелле, заводри работниксене пӗтӗмпех хамӑрӑн пахчаҫимӗҫсемпе тата ҫӗрулмипе апатлантармалла тумалла.
5. Хӗле кӗриччен производство корпусӗсенчи строительство ӗҫӗсене вӗҫлемелле тата заводӑн пурӑнмалли ҫуртсене юсамалла.
6. Фронтра вилнисен тата Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсен ҫемьисене куллен пулӑшса тӑмалла.

Сывӑ пултӑр пирӗн Ҫӗнтерӳ!

Сывӑ пултӑр пире ҫӗнтерӳсем тума хавхалантарса тата организацилесе пыракан коммунистсен партийӗ—Ленин — Сталин партийӗ!

Сывӑ пултӑр совет халӑхӗн аслӑ ҫулпуҫӗ, Совет Союзӗн Генералиссимусӗ Сталин юлташ!

Цехсемпе отделсенчи пухусенче с ӳтсе-явса пӗр кӑмӑллӑн йышӑннӑ.

Сири республикин Чрезвычайнӑй посланникӗ тата Полномочнӑй министрӗ Фаиз Эль-Хури господин СССР Верховный Совет Президиумӗн Председательне М. И Калинина хӑйӗн верительнӑй грамотисене пани

Июлӗн 18-мӗшӗнче Кремльте СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин Сири республикин Чрезвычайнӑй посланникне тата Полномочнӑй министрне Фаиз Эль-Хури господина йышӑннӑ, Фаиз Эль-Хури господин М. И. Калинина хӑйӗн верительнӑй грамотисене панӑ.

Верительнӑй грамотсем панӑ ҫӗрте СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн заместителӗ С. И. Кавтарадзе, Наркоминделӑн Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫ отделӗн Заведующийӗ И. В. Самыловский, СССР Наркоминделӗн Протокол отделӗн Заведующийӗн Заместителӗ Г. И. Фомин пулнӑ.

Верительнӑй грамотӑсем панӑ хыҫҫӑн М. И. Калинин Фаиз Эль-Хури господинпа калаҫнӑ.

Совет профсоюзӗсен делегацийӗ США-на тухса кайнӑ

США-н производствӑллӑ профсоюзӗсен конгресӗ чӗннипе ҫак кунсенче совет профсоюзӗсен делегацийӗ США-на тухса кайнӑ. Делегаци составӗнче — В. В. Кузнецов (делегаци руководителӗ), Н. А. Гайсенок, В. И. Гостев, М. Е. Жданов, К. Е. Орлова, А. П. Степанов, М. М. Фалин, И. Г. Чевтаев, И. Д. Шостак. (ТАСС).

Кронштадт Тинӗс-Ҫар флочӗн кунӗ умӗн

КРОНШТАДТ, июлӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Ленинград хулине 900 кун хушшинче хӳтӗлесе тӑнӑ хула-крепость Тинӗс-Ҫар флочӗн кунне уявлама хатӗрленет.

Вӑл кун совет халӑхӗ фашистла нимӗҫ захватчикӗсене ҫӗнтернине уявлас тата Совет государствин вӑй-хӑватне малалла та ӳстерессишӗн мобилизацилес лозунгпа иртет.

Чаҫсенче, карапсенче тата тинӗс-ҫар шкулӗсенче лекторсем, агитаторсем, беседчиксем «Тинӗс-Ҫар Флочӗн Кунӗ», «Ленин—Сталин партийӗ совет халӑхӗ, унӑн Хӗрлӗ Ҫарӗ тата Тинӗс-Ҫар Флочӗ фашистла нимӗҫ захватчикӗсене ҫӗнтернин организаторӗпе хавхалантаракан» темӑсемпе докладсем ирттереҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Балтика карапӗсем ҫинчи артиллеристсемпе Кронштадт форчӗсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче кӗрешни ҫинчен, 1944 ҫулта Нарва заливӗнче пулнӑ операцисем ҫинчен тата ыттисем ҫинчен те докладсем пулса иртмелле.

Офицерсен клубӗнче, хула паркӗнчи Тинӗс-Ҫар флочӗн ҫуртӗнче карапсемпе чаҫсен личнӑй составӗ Совет Союзӗн Геройӗсемпе тӗл пулаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗ Тӑван ҫӗршывшӑн кӗрешес ӗҫе хутшӑннине кӑтартса паракан Совет Союзӗн Геройӗсем—морякӗсем ҫинчен, пирӗн Тинӗс-Ҫар Флочӗн историйӗ ҫинчен каласа паракан выставкӑсем уҫӑлаҫҫӗ. Фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑ моряксем, тинӗс завочӗн стахановецӗсем радиопа сӑмах тухса калаҫҫӗ.

Уяв кунӗнче шлюпкӑсемпе ӑмӑртса ишеҫҫӗ, футбол, баскетбол, волейбол вӑййисем тата пӑшал пемелли ӑмӑртусем пулса иртеҫҫӗ. Моряксем госпитальсенче сывалса выртакан хӑйсен юлташӗсем патне кайса, вӗсене парнесем параҫҫӗ.

Ҫуллахи садра парти, совет тата хулари общественнӑй организацисемпе пӗрле, Кронштадт гарнизонӗн ларӑвӗ пулса иртет. Ҫавӑн пек ларусем карапсем ҫинче, чаҫсенче тата фортсенче те пулса иртмелле.

Ҫӗнтерӳ тырпулне пухса кӗртме пур енчен те тӗплӗн хатӗрленсе ҫитер!

Комбайнсем колхозсене тухса кайрӗҫ

КУСЛАВККА. (Телефонпа). МТС-ри трактористсемпе трактористкӑсем хамӑрӑн тӑван республика 25 ҫул тултарнӑ ятпа пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса чылай паллӑ ҫитӗнӳсем турӗҫ. Скворцов юлташ ертсе пыракан бригада тракторсемпе ӗҫлемелли ҫулталӑкри плана 116 процент тултарчӗ, 1233 килограмм горючи перекетлерӗ. Антонов юлташ ертсе пыракан бригада плана 109 процент тултарчӗ, 2889 килограмм горючи перекетлесе хӑварчӗ. Уйрӑм трактористсем татах та пысӑкрах ҫитӗнӳсем турӗҫ. Тракторист А. Иванов хӑйӗн планне 145 процент тултарчӗ. М. Яковлева трактористка—140 процент, А. Ларюхин 135 процент тултарчӗҫ. Пирӗн МТС тракторсемпе ӗҫлемелли ҫулталӑкри плана 86 процент тултарнӑ, 9 тонна ытла горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Горючи нумай перекетлени ҫуракине вӗҫленӗ хыҫҫӑнах ҫӗртме тума лайӑх май туса пачӗ. Ҫӗртме тумалли плана пирӗн МТС 106 процент тултарчӗ. Тракторсемпе тунӑ ӗҫе кашни колхозрах лайӑх тесе йышӑннӑ.

Ҫӗртме тунӑ вӑхӑтрах пирӗн комбайнерсемпе машинистсем хӑйсен комбайнӗсемпе молотилкисене юсама тытӑнчӗҫ.

Кӑҫал пирӗн 11 комбайн, 11 молотилка юсамаллаччӗ. Чӑн малтан эпир комбайнсене юсама тытӑнтӑмӑр. Комбайнсене юсас ӗҫре уйрӑмӑнах Желтухин, Казаков, Терентьев, Скворцов, Антонов юлташсем лайӑх ӗҫлерӗҫ. Вӗсем хӑйсен комбайнӗсене срокра тата лайӑх пахалӑхпа юсаса пӗтерчӗҫ. Комбайнсемпе ӗҫлеме тивӗҫлӗ тракторсене те пурне те юсанӑ. Халӗ эпир 8 комбайн юсаса пӗтернӗ, юлашки виҫӗ комбайна та пайӑн-ыран юсаса пӗтеретпӗр.

Тырпул пухса кӗмелли плана хамӑр коллективра пӑхса тухнӑ. Ҫавӑнпа та юсаса пӗтернӗ комбайнсене хӑйсем ӗҫлемелли вырӑна кӑларса ятӑмӑр.

Молотилкӑсене юсас енӗпе эпир кая юлса пыратпӑр-ха: пурӗ те 50 процента яхӑн кӑна юсанӑ. Вӗсене юсассине тепӗр эрнерен вӗҫлеме шутлатпӑр.

Ф. ПРИКОВ.
МТС-ӑн старши агрономӗ.

Кунта утӑ ҫулма васкамаҫҫӗ

ЙӖПРЕҪ. (Телефонпа). Районри колхозсем кӑҫал 1500 гектар ытла утӑ ҫулса пухмалла.

Анчах «Строитель», «Красный фронтовик», «Ударник», «Красная звезда», «Большевик» колхозсем утӑ ҫулса пухас тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ. Улӑхсенчи тата акнӑ курӑксем ҫитӗнсе ҫитнӗ пулсан та, вӗсем утӑ ҫулма тытӑнман.

«Строитель» колхоз председателӗ Лукин юлташ утӑ ҫулас ӗҫе организацилессишӗн тӑрӑшмасть. Колхозниксене утӑ ҫулас ӗҫе мобилизацилемен. Утӑ ҫулса кӗртнӗ ҫӗрте ӗҫлекенсене ӗҫкунӗ ҫумне хушса тӳлемелли йӗрке ҫинчен колхозниксене ӑнлантарса паман, ҫавасене туптаса хуман, лапаткасем ҫителӗксӗр.

«Строитель» колхоз иртнӗ ҫулта выльӑх апачӗ ҫителӗксӗррине пула пысӑк сиен курчӗ, анчах та иртнӗ ҫулхи ҫитменлӗхсене кунта шута илмен.

Ҫав вӑхӑтрах уйрӑм колхозниксем ҫаран утине хӑйсене валли ҫулса илеҫҫӗ. Нумаях пулмасть, Сорокинпа Наянов хӑйсене валли утӑ колхоз улӑхӗнчен ҫулса кӗнӗ.

П. КУРАКОВ.

Выльӑх апачӗ хатӗрлеҫҫӗ

Комсомольски районри колхозсем кӑҫал выльӑхсем валли апат хатӗрлес тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Кашни колхозрах, утӑсӑр пуҫне, вӗлтӗрен, арӑмути хатӗрлеҫҫӗ тата силос хываҫҫӗ.

Районӗпе халӗ 450 тонна ытла силос хывнӑ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмӑнах «Искра» колхозра тимлӗн ӗҫленине палӑртмалла. Ҫак колхоз июлӗн 13-мӗшӗ тӗлне 56 тонна силос хывнӑ. «Ҫӗнтерӳ» колхоз 30 тонна, Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз 40 тонна, «Первое августа» колхоз 20 тонна ытла силос хывнӑ. Силос валли ҫумкурӑксемпе тата ҫырмасенче ӳсекен курӑксемпе усӑ кураҫҫӗ.

Вӗлтӗрен, арӑмути хатӗрлес ӗҫ те ӑнӑҫлӑн пырать. «Большевик» колхозра 40 центнер вӗлтӗрен, «Коммунар» колхозра 37 центнер, Красин ячӗпе тӑракан колхозра 15 центнер вӗлтӗрен тата 15 центнер ытла арӑмути хатӗрленӗ.

«Комбайн» колхозра та вӗлтӗренпе арӑмути 20 центнер яхӑн хатӗрленӗ.

Вӑрман ҫывӑхӗнчи колхозсем ҫулҫӑллӑ апат та хатӗрлеҫҫӗ. «Восход» колхоз 240 лав, «Ударник» колхоз 50 лав, «Мураты» колхоз 20 лав йывӑҫ турачӗ касса хатӗрленӗ.

Районри колхозсем утӑ ҫулма массӑллӑн тытӑнчӗҫ. Кашни колхозрах халӗ хӗрсе утӑ ҫулаҫҫӗ. Уяр ҫанталӑк вӑйлӑ ҫитӗннӗ утта вӑхӑтра пухса кӗртме май парать. Июлӗн 13-мӗшӗ тӗлне 378 гектар ҫинчен ытла утӑ пухса кӗртнӗ. «Культура» колхоз 34 гектар, Калинин ячӗпе тӑракан колхоз 28 гектар, «Мураты» колхоз 25 гектар, «Новая жизнь» колхоз 20 гектар ытла ҫулса пухнӑ.

Ф. МАЛЫШЕВ.
Ҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ.

Сведенийӗсем пур, анчах силосӗ ҫук

МУРКАШ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем силос хывма тытӑнчӗҫ. «Венера» колхоз 50 тонна, «Красный Октябрь» колхоз 40 тонна, Энгельс ячӗпе тӑракан колхоз 50 тонна, «Труд» колхоз 30 тонна хывнӑ.

Анчах та, районӗпе илсен, силос хывасси калама ҫук япӑх пырать-ха, плана пурӗ те 12 процента яхӑн кӑна тултарнӑ. Уйрӑм колхозсен правленийӗсем силос хывнӑ тесе ҫӗрӗҫ пайне суя сведенисем параҫҫӗ. Сӑмахран, «Аврора» колхоз пурӗ те 15 тонна кӑна силос хывнӑ, районри ҫӗрӗҫ пайне вара 30 тонна ытла хывнӑ тесе сведени панӑ.

Колхоз председателӗ Казамбаев юлташ: силоса виҫсе пӑхма ҫук вӗт, ӑна темӗн чухлӗ те кӑтартма пулать, тесе ларать.

«Знамя труда», «Ново-Акрамово» тата ытти нумай колхозсем те силос хывма тытӑнман.

Вӗлтӗрен, арӑмути, йывӑҫ турачӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе нихӑш колхозра та нимӗн те тумаҫҫӗ.

Выльӑх апачӗсем хатӗрлесси—паянхи пысӑк ӗҫсенчен пӗри, анчах районри чылай колхозсенче ҫакна ӑнланса илмен. Районри ҫӗрӗҫ пайӗн работникӗсем те телефон тӑрӑх сведенисем илсе кӑна лараҫҫӗ.

Ф. МАЛЫШКИН.

10.000 глобус

РСФСР Наркомпросӗ йышӑннӑ тӑрӑх, Ленинградра глобуссем тӑвакан фабрика уҫӑлать. Кунӑр пуҫне, пособисем пичетлесе кӑларакан 9-мӗш номер фабрикӑра глобуссем тума тытӑнаҫҫӗ. Кӑҫалхи ҫул мӗн пурӗ 10.000 глобус туса кӑларма палӑртса хунӑ. (ТАСС).

Паттӑрсен ячӗпе

Паттӑрсем савӑнмалӑх
Хумханать тулӑх хир.
Талккишпех ҫутҫанталӑк
Сарнӑ ешӗл кавир.

Ҫав паха кавир тӑрӑх
Эшелон ӑмӑртать.
Мӗнле ӑшӑ та ырӑ
Паян кун кӑкӑрта!

Йывӑҫсем пуҫ таҫҫӗ
Чаплӑ эшелона.
Кайӑксем мухтавлаҫҫӗ
Ҫакӑ ырӑ куна.

Эшелон, ӑмӑрт, ӑмӑрт,
Малаллах вӗҫтерсем!
Ҫитчӗр кӑмӑллӑн, хӑвӑрт
Килсене паттӑрсем.

Кунта амӑшӗ чӗнет-ҫке
Чи матур ывӑлне.
Пике чун пек кӗтет-ҫке
Хӑйӗн арӑсланне.

Паттӑрсем, килӗрсем, тет,
Йыхӑрать пурсӑра
Саркавай пичкере те
Йӳҫсе ҫитнӗ сӑра.

Такасем эпир пуснӑ
Эпир тунӑ шӑрттан.
Хапхасем эпир уҫнӑ,—
Хапӑл пӗтӗм чунтан.

Сирӗн пек паттӑрсемшӗн
Тулӑх ҫӑкӑр-тӑвар.
Хамӑр аслӑ ҫӗрсемшӗн
Эсир тӑтӑр хастар!

Йышлӑлантӑр, кӗрлетӗр
Паттӑрсен кӗреки;
Ҫӗнтерӳшӗн ҫӗклентӗр
Пирӗн савӑш курки.

Аслӑ Сталиншӑн, тусшӑн,
Паттӑрсен ячӗпе,
Юрӑ пуҫлӑпӑр ӑшшӑн
Ваттисен йӑлипе.

Аркадий ЕСХЕҪ

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Чӑваш АССР-ӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсене, ялхуҫалӑх, промышленность, культура тата искусство работникӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑлассе ҫинчен

Малалли. Пуҫламӑшӗ «Чӑваш Коммунин» 135-мӗш номерӗнче.

ИШЛЕЙ РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

1. Нил Васильевич **Амурцева**—«Самолет» колхоз председательне.
2. Наталия Андреевна **Андреевӑна**—«Правда» колхоз бригадирне.
3. Иван Николаевич **Волкова**—«Большевик» колхоз бригадирне.
4. Михаил Алексеевич **Денисова**—«Красные Яуши» колхозри пахчаҫимӗҫ бригадирне.
5. Филипп Трофимович **Пайманова**—«Большевик» колхоз председательне.
6. Ксенофонт Федорович **Федорова** — райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономне.
7. Александр Филиппович **Филиппова**—район прокурорне.
8. Екатерина Филипповна **Филипповӑна**—Салапайкассинчи зооветпунктри участковӑй зоотехника.

КАЛИНИНО РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

1. Александра Алексеевна **Алексеевӑна**—Калининӑри ача ҫуртӗн директорне.
2. Михаил Андреевич **Андреева**—ВКП(б) райкомӗн агитаципе пропаганда пайӗн заведующине.
3. Иван Гаврилович **Гаврилова**—«Коминтерн» колхоз председательне.
4. Екатерина Трофимовна **Дорофеевӑна**—ВКП(б) райкомӗн организаципе инструкторсен пайӗн заведующине.
5. Мирон Ефимович **Ефимова**—Хӑмӑш Нурӑс ял Совет исполкомӗн председательне.
6. Ефим Иванович **Иванова**—МТС-ри трактор бригадин бригадирне.
7. Геннадий Иванович **Куракова**—Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз председательне.
8. Нина Матвеевна **Матвеевӑна**—«Суттала» колхоз бригадирне.
9. Владимир Владимирович **Смирнова**—«Броневик» колхоз председательне.
10. Михаил Макарович **Смирнова**—Асӑмҫырми ял Совет исполкомӗн председательне.
11. Мария Федоровна **Федоровӑна**—Асӑмҫырминчи вулав ҫурчӗн заведующине.
12. Николай Харитонович **Шуркова**—«Броневик» колхоз бригадирне.

КАНАШ РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

1. Ефросиния Ивановна **Ивановӑна** — МТС-ри 6-мӗш трактор бригадин комбайнерне.
2. Зоя Ильинична **Ильинана**—Буденный ячӗпе тӑракан колхозри старши конюха.
3. Матрена Семеновна **Лукинана**—«3-я пятилетка» колхоз председательне.
4. Екатерина Андреевна **Мельниковӑна**—«Соревнование» колхозри хурт-хӑмӑр ӑстине.
5. Антон Яковлевич **Мухина**—Жуков ячӗпе тӑракан колхоз председательне.
6. Варвара Тимофеевна **Степановӑна**—«1-ое мая» колхоз чабанне.
7. Иван Яковлевич **Яковлева**—«Красная Армия» колхоз председательне.
8. Николай Ермолаевич **Якушина**—районри халӑх следовательне.

КАНАШ ХУЛИ ТӐРӐХ:

1. Василий Григорьевич **Арюхина** — государство хӑрушсӑрлӑхӗн майорне.

Малалли пулать.

Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене пулӑшасси

РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене пулӑшас ыйтӑва сӳтсе-явнӑ.

Юлашки икӗ ҫул хушшинче социальнӑй обеспечени органӗсем инвалидсене пенси парас, ӗҫе вырнаҫтарас, протезсем хатӗрлесе парас тата материальнӑй пулӑшу парас тӗлӗшпе чылай ӗҫсем туса иртерчӗҫ. Анчах ҫак ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем те пур-ха.

РСФСР Совнаркомӗ Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене пулӑшас ӗҫе лайӑхлатасси ҫинчен постановлени йышӑннӑ. 1945 ҫулхи июльпе август уйӑхӗсенче Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене закон тӑрӑх памалли ҫӑмӑллӑхсем панипе паманнине тӗрӗслесе тухаҫҫӗ.

Облаҫсемпе крайсен исполкомӗсене, автономиллӗ республикӑсен совнаркомӗсене тата республикӑсене пӑхӑнса тӑракан хуласен исполкомӗсене ҫапла тума хушнӑ: инвалидсене профессие вӗрентес тӗлӗшпе предприятисене, совхозсене, МТС-сене тата ытти организацисене заданисем памалла. Вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн вӗсене вӑл ҫынсене вара ҫав организацисенче ӗҫе илмелле.

Всекоопинсоюза кӑҫал иккӗмӗш группӑра тӑракан инвалидсене вӗрентме производство мастерскойӗсем уҫма хушнӑ.

Влаҫӑн вырӑнти органӗсем Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене столовӑйсемпе, мунчасемпе, прачечнӑйсемпе, парикмахерскисемпе, хула транспорчӗпе усӑ курас тата чир-чӗртен сывалас тӗлӗшпе чи малтан пулӑшмалла, вӗсен хваттерӗсене юсамалла тата топливо парса пулӑшмалла.

1-мӗш группӑри инвалидсене уйрӑм учета илеҫҫӗ. Материальнӑй пулӑшу вӗсене чи малтан памалла. РСФСР Совнаркомӗ йышӑннӑ постановлени тӑрӑх, интернатсемпе кану ҫурчӗсенче пурӑнакан Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене пулӑшас ӗҫе те лайӑхлатмалла. (ТАСС).

ВЦСПС-ра

Профсоюзсем тырпул пухса кӗртес ӗҫе хутшӑнасси ҫинчен

ВЦСПС секретариачӗ СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «1945 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановлени тӑрӑх профорганизацисем мӗн тумалли ҫинчен сӳтсе-явнӑ.

Профорганизацисене совхозсем, МТС-сем, элеваторсем, подсобнӑй хуҫалӑхсем тырпул пухса кӗртме тата ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлеме хатӗррине государство енчен тӗрӗслес ӗҫе хутшӑнма хушнӑ. Фабзавкомсемпе месткомсен тырпул пухса кӗртмелли плансене вӑхӑтра ҫырса хатӗрлесси ҫине тата уйрӑм участоксене уйхир бригадисем ҫумне вӑхӑтра ҫирӗплетесси ҫине уйрӑмӑнах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхмалла. Молотилкӑсем ҫинче ӗҫлекен работниксемпе тата комбайнерсемпе кӗске вӑхӑт хушши занятисем туса ирттермелле, вӗсене машинӑсене пӑхасси тата вӗсемпе усӑ курасси ҫинчен ӑнлантарса памалла. Тырпула пухса кӗртес ӗҫре уйрӑм сдельщинӑпа тата звено сдельщинипе анлӑн усӑ курмалла.

ВЦСПС секретариачӗ совхозсенчи, МТС-сенчи тата подсобнӑй хуҫалӑхсенчи рабочисемпе специалистсем тата служащисем хушшинче тырпул пухса кӗртес ӗҫе вӑхӑтра тата пысӑк пахалӑхпа иртерес тӗлӗшпе—ӗҫ нормине ытлашшипех тултарас, туртӑм вӑйне тивӗҫлӗн пӑхас, горючипе сӗрмелли материалсене перекетлес тӗлӗшпе социализмлӑ ӑмӑрту организацилеме сӗннӗ. Ӑмӑрту итогӗсене кашни кунах палӑртса пымалла. Тырпул пухса кӗртес тӗлӗшпе ӗҫлекен рабочисем валли профсоюзсен культурӑпа йӑла тӗлӗшӗнчен тивӗҫлӗ условисем туса памалла: пурӑнмалли суртйӗре вӑхӑтра юсаса памалла, ача яслисем, ача сачӗсем тата площадкӑсем организацилемелле, хаҫатсем вуласа памалла тата ытти те. Профсоюз организацийӗсене ҫак ӗҫре пулӑшас шутпа совхозсене, МТС-сене тата подсобнӑй хуҫалӑхсене ВЦСПС-па профсоюзсен Центральный Комитечӗсен бригадисене яраҫҫӗ, вӗсене унта тырпул пухса кӗртмелли пӗтӗм вӑхӑта яраҫҫӗ. (ТАСС).

1945 ҫулта харпӑрхӑй валли ҫуртйӗр тӑвасси

ВЦСПС Президиумӗ хӑйӗн ларӑвӗнче 1945 ҫулта харпӑрхӑй валли ҫуртйӗр тӑвас программа пурнӑҫа мӗнле кӗрсе пыни ҫинчен сӳтсе-явнӑ.

ВЦСПС-ӑн Ҫуртйӗрпе йӑла отделӗн заведующийӗ Куркина юлташ палӑртнӑ тӑрӑх, харпӑрхӑй валли ҫуртйӗр тӑвакансене государство 1944 ҫулта 295 миллион тенкӗ, 1945 ҫулта—331 миллион тенкӗ кивҫен укҫа панӑ. Ҫав укҫапа ӗҫсыннисем пӗр хваттерлӗ тата икӗ хваттерлӗ 25 пин ҫурт тумалла.

Пурнинчен ытла халӑх хуҫалӑхӗн ертсе пыракан пайӗсенчи — хура металлурги предприятийӗсенчи, чугун ҫул транспорчӗнчи, ҫӗнӗ стройкӑсенчи рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене пулӑшасси ҫине ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ.

Строительство Халӑх Комиссариачӗн предприятийӗсенчи рабочисемпе специалистсем валли кӑҫал 1000 ҫурт тума палӑртнӑ. Челябинскри электроцентраль, танк промышленноҫӗнчи заводсен, хура металлургин, Ҫулйӗр Халӑх Комиссариачӗн рабочийӗсемпе специалисчӗсем валли 630 ҫурт тӑваҫҫӗ. Донбасс районӗсенче, Кемерово облаҫӗнче, Магнитогорск, Новосибирск тата Свердловск хулисенче ҫӗршер ҫурт тума палӑртнӑ.

ВЦСПС Президиумӗ профорганизацисене ҫурт тӑвас текенсен заявленийӗсене предприятисен директорӗсемпе пӗрле августӑн 1-мӗшӗччен пӑхса тухса ҫирӗплетме, ҫӗр лаптӑкӗсем тивӗҫлӗ вырӑнсенче уйӑрса парассишӗн тӑрӑшма хушнӑ.

Харпӑрхӑй валли ҫуртйӗр тӑвакан ҫынсен хисепӗ 10 ҫынтан ытларах шутланакан заводсенче завкомсем ҫумӗнче ҫуртйӗр строительствине пулӑшакан комиссисем организацилемелле. (ТАСС).

Тырпул пухса кĕртессипе ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлессине тимлĕн кĕтсе илсе ирттерер

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă хăйсен постановленийĕнче мĕнпур партипе совет, хатĕрлевпе çĕрĕç органĕсене, МТС-семпе совхозсене тата колхозсене çакна асра тытма хушаççĕ: «Мирлĕ строительство тапхăрне тата халăх хуçалăхĕнче вăрçă юлашкийĕсене пĕтерес тапхăра кĕнĕ чухне çĕршыв валли продовольствипе чĕртавар тата пуринчен малтан, тырпул парса тăрасси хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчи чи паха задачăсенчен пĕри пулса тăрать, çав задачăна ăнăçлăн татса панинчен промышленноçпа транспорта, хуласемпе ялсене, нимĕç захватчикĕсем ишĕлтерсе хăварнăскерсене, хăвăртрах юсаса ура çине тăратасси, халăх пурнăçне пур енĕпе те лайăхлатасси тата хамăр Тăван çĕршывăн хăватне малалла тĕреклетсе пырасси килет».

Правительствăпа парти постановленийĕнче тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсен большевикла программине вĕçне çитиех туллин тата конкретлăн кăтартса панă. Ăна пурнăçа кĕртме çав тери пысăк йĕркелĕхпе тимлĕх кирлĕ. Пирĕн пур ĕçре те—тырпул пухса кĕртме хатĕрленес тата ăна туса ирттерес ĕçре, тырпул хатĕрлемелли плана пурнăçа кĕртес ĕçре пысăк йĕркелĕх пулмалла.

Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсем, пирĕн юратнă Тăван çĕршыври мĕнпур халăх пекех, хăйсен мирлĕ ĕçĕн паха результачĕсемпе мухтанма пултараççĕ: уйхирсенче пур çĕрте те лайăх тырпул ÿссе çитĕнет. Халĕ ĕнтĕ партипе совет тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсем, колхозниксемпе колхозницăсем, совхозсемпе подсобнăй хуçалăхсенчи рабочисемпе работницăсем тырпул пухса кĕртме хатĕрленес тата ăна туса ирттерес, государствăна тырă памалли плана срокчен тултарас ĕçе хастаррăн та вăхăтра тытăнма тивĕçлĕ.

Тырă вырса пухма лайăх хатĕрленни тырпул ăнăçлăхне татса парать. Уйхир ĕçĕсенче пур çĕрте те вăхăт питĕ паха япала пулса тăрать пулсан, тырпул пухса кĕртес ĕçре вăхăт вара уйрăмах паха, мĕншĕн тесен «тырпул пухса кĕртес ĕç—вăхăтра тумалли ĕç, вăл кĕтсе тăма пултараймасть. Вăхăтра вырса пуçтартăн—тырпуллă пултăн, кая юлтăн—тырпулсăр юлтăн» (Сталин).

Тырпул пухса кĕртес ĕçпе пĕр вăхăтрах ялхуçалăхĕнчи ытти тĕрлĕ пысăк ĕçсем (кĕлте турттарса капана хывасси, авăн çапасси, кĕрхи тырăсем акасси, государствăна тырă парасси, кĕрхи çĕртме тăвасси тата ыттисем те) килеççĕ. Çавăнпа та пур ĕçсене те пĕлсе, пĕрпĕринпе таччăн çыхăнтарса пымалла. Кунта пĕр ĕçе тепĕр ĕç хыççăн, черетлĕн туса пыни пулмалла мар.

Тырпула вăхăтра та кал-каллăн пухса кĕртес тесен, пуринчен малтан тырă вырмалли мĕнпур машинăсемпе ĕç хатĕрĕсене юсаса хатĕрлемелле. Советпа çĕрĕç органĕсен тата МТС-сен чи кăткăсрах машинăсене—комбайнсене юсас ĕç çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Комбайнсемпе кăçалхи çул пирĕн тĕштырă культурисен чылай пысăк пайне вырса пуçтармалла пулать. Анчах çав машинăсене юсас ĕç МТС-сенче паха та çителĕксĕр пырать-ха. Хăшпĕр МТС-сен руководителĕсем пĕлтĕрхи йăнăшсене шута илмен, вĕсем комбайнерсене, çавăн пекех МТС-ри машинăсем юсас тĕлĕшпе ĕçлекен кадрсене тата мастерскойсенчи оборудованисене комбайнсем юсас ĕçе кÿçарман. Тытăнасса та ку ĕçе кая юлса тытăннă. Çавна пула ĕнтĕ юсама тивĕçлĕ 365 комбайнран 143 комбайн кăна юсанă. Элĕк, Кувакино, Первомайски, Пăрачкав, Сиява тата Шăмăршă МТС-ĕсенче вара паянхи куна çитсе пĕр комбайн та юсаса кăларман. Çав МТС-сен руководителĕсем хăйсен сÿрĕк ĕçне комбайнсем валли запаслă пайсем çитменнипе ăнлантарса пама пăхаççĕ. Запаслă пайсем вырăнта туса хатĕрлес тата киввисене юсаса çĕнетес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Пăрачкавпа Шăмăршă МТС-ĕсем запаслă пайсене тата машинăсене юсамалли материалсене Автотрактороснабпа Сельхозснабран паянхи куна те илсе кайман.

Малта пыракан Вăрнар, Шăхасан, Красноармейски МТС-ĕсем те хăйсен комбайнĕсене хатĕрлесе çитермен-ха.

Комбайнсене юсас ĕçе начар туса пынипе пĕрлех, чылай МТС-сенче юсав ĕçĕн пахалăхĕ çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Юсанă комбайнсене ĕçлеттерсе пăхмасăрах юсавлисен шутне кĕртеççĕ. Комбайн ĕçлесе пынă чухнех тырă пушатмалли площадкăсем тумаççĕ, комбайнсен моторĕсене регуляторсем лартмасăр е регуляторсене тĕрĕслемесĕр юсавран кăлараççĕ. Юсанă комбайнсене правительство комиссийĕсем тĕрĕслесе йышăнмалли йĕркене чылай çĕрте пăсаççĕ.

Комбайнсене хатĕрленипе пĕрлех, пирĕн тырă вырнă çĕрте сенокосилкăсемпе усă курасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Çавăнпа та колхозсенчи пур пек косилкăсене, утă çулса пĕтерне хыççăн, тырă вырмалли туса йĕркелемелле.

МТС-сенче кăткăс молотилкăсене юсас ĕç япăх пырать. Юсама тивĕçлĕ 330 молотилкăран 109 молотилка çеç юсанă.

Комбайнсемпе молотилкăсене çывăх вăхăтрах юсаса çитермелле. Юсанă комбайнсем çумне комбайн ĕçленĕ чухнех çапнă тырра пушатмалли, тĕштырă тăкаланасран сыхланмалли, çапнă улăма купаласа хăвармалли тата ÿкнĕ тырпула вырса пухмалли хатĕрсем туса лартмалла. Комбайнсене хиртех техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăма кирлĕ инструментсем тата уйрăмах çийĕнсе пĕтекен запаслă пайсем çителĕклĕ таран уйăрса памалла. Колхозсенче комбайна ĕçре пулăшма, комбайн çапнă тырра турттарма кирлĕ транспортпа колхозниксем тата михĕсемпе шăналăксем уйăрса памалла. Комбайнсемпе ăçта ĕçлемеллине кăтартса комбайнерсене халех маршрутсем памалла, комбайнсемпе вырса пухмалли участоксене тепĕр хут тĕрĕслемелле, тырă пулса пынине сăнаса тăрас ĕçе йĕркелемелле.

Комбайнсемпе молотилкăсене юсанипе пĕрлех, советпа çĕрĕç органĕсем, МТС-семпе совхозсем тырă вырмалли çăмăл машинăсемпе ытти тĕрлĕ ĕçхатĕрĕсене юсасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхма тивĕçлĕ. Ку тĕлĕшпе республикăри колхозсенче ĕç япăх пырать-ха.

Йĕпреç, Канаш, Пăрачкав, Чурачăк, Элĕк районĕсенче жнейкăсем юсамалли плана 25—30 процент кăна тултарнă. Çак районсенчи пекех, Калинино, Сĕнтĕрвăрри, Советски тата Елчĕк районĕсенче лашапа ĕçлекен молотилкăсене юсас ĕç вăрахăн пырать. Ку çитменлĕхе халех пĕтермелле.

Пĕлтĕр уйрăм колхозсенче машинăсемпе ĕçлеме пĕлекен çынсем çук пирки тырă вырмалли машинăсемпе усă курман. Çакă вăл ĕнтĕ районсен руководителĕсене тырă вырмалли машинăсемпе ĕçлекен кадрсене хатĕрлес тĕлĕшпе халех çине тăрса ĕçлеме хушать.

Тырă вырса пухмалли машинăсене юсас ĕçре ялхуçалăхне пирĕн промышленность предприятийĕсем, запаслă пайсем туса парса, токарьсемпе слесарьсене тата тимĕрçĕсене ярса, пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. Ялхуçалăхĕ валли запаслă пайсем туса хатĕрлес тĕлĕшпе республикăри хăшпĕр предприятисем çине тăрса ĕçлеççĕ. Анчах çапах та пирĕн предприятисем ялхуçалăхĕ умĕнче пысăк парăмра тăраççĕ-ха. Государствăн çав паха задачине çине сÿрĕк пăхассине пĕтермелле, МТС-семпе колхозсем валли запаслă пайсем туса кăлармалли плана кăтартнă сроксенче пĕр сăмахсăрах пурнăçламалла.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра транспорт инвентарĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах ку ĕç çине халĕ кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ-ха. Çавна пула тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра лашасемпе кирлĕ пек туллин усă курма май пулмасть. Урапасемпе хăмăтсем çитмен пирки пĕр лаша та, пĕр ĕç выльăхĕ те ахаль тăма тивĕçлĕ мар.

Пирĕн витнĕ итемсемпе сушилкăсене вăхăтра хатĕрлесе çитермелле, итемсем çинчи улăм юлашкийĕсене тасатмалла, сушилкăсенчи кăмакасене юсамалла, çĕнĕрен витнĕ итемсемпе сушилкăсем тумалла.

Çавăн пекех кашни колхозрах тырă хумалли складсене юсаса йĕркелемелле. Колхоз руководителĕсен халех пур амбарсене те тĕрĕслесе тухмалла; юсамаллисене юсас пулать, дезинфекци тăвас пулать. Авăн çапас ĕçсем пуçланиччен колхозсенчи тырă виçмелли хуçалăха юсаса йĕркене кĕртмелле. Кашни колхозрах юсавлă, тĕрĕсленĕ виçесем пулмалла.

Хир пуссисем ялтан аякра выртакан колхозсенче тырă вырнă вăхăт валли хирти стансем тусан аван пулать. Советпа çĕрĕç органĕсем ку ыйту пирки халех тĕплĕн шухăшласа пăхма тата çав ĕçсене тунă çĕре колхозниксене мобилизацилеме тивĕçлĕ.

Тырпула уйхирте, итем çинче, амбарсенче талăкĕ-талăкĕпех хурал тăрса сыхлассине йĕркелемелле. Уйхирте те, итемсем çинче те пушартан сыхланмалли мероприятисене тĕплĕн организацилемелле.

Кашни колхозрах çапнă тырăпа ытти ялхуçалăх продукчĕсене тĕрĕс шута илсе тата тĕплĕн прихода кĕртсе пымалла. Колхозниксене тата тырă виçекенсене ку ĕçе тĕплĕн вĕрентмелле.

Тырă вырса пухас ĕçе мĕнпур çынсене явăçтарас тесен, колхозсемпе совхозсенче ача яслисемпе площадкисене организацилес пулать.

Тырпула чи кĕске срокра пухса кĕртмелле. Çавăнпа та ĕçе вăхăтра тытăнмалла. Комбайнсене ĕçе яма май килмесен, тырра çавапа çулмалла, çурлапа вырмалла, жнейкăсене, лобогрейкăсене, косилкăсене ĕçе ямалла. Мĕнпур майсемпе тата вăйсемпе усă курса, тырă вырса пухас ĕçе анлă фронтпа туса пымалла. Тырпула тăккаланине хирĕç вирлĕн кĕрешмелле, çулнă хыççăн çийĕнчех пучах пухас ĕçе организацилес пулать.

Тырă турттарма михĕсемпе шăналăксем тата ещĕксем вăхăтра хатĕрлесе хумалла. Кĕлте турттармалли урапасен тĕпне, тĕштырă тăкăнмалла мар туса, лайăх хупсем сармалла. Капансене татсатнă итемсем çине çеç хывмалла; итем çине тăкăннă тĕштырра кулленех шăлса пуçтарас пулать.

Тырă вырса пухнă çĕрте ĕçе тĕрĕс организацилени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пĕтĕм ĕçе, колхозникĕн пĕр сехет те, пĕр минут та ахаль ан çухалтăр тесе, йĕркелемелле, лайăх ĕçлекенсене хавхалантарса пымалла. Пысăк мар ушкăнсемпе тата пĕчченшер сдельщинăпа ĕçлес меслет тĕп вырăн йышăнса тăма тивĕçлĕ. Колхознике заданисем пĕр кунлăх кăна мар, темиçе кунлăх памалла. Сдельщинăпа ĕçленĕ чухне ăмăрту та вăйлăнрах сарăлать, мĕншĕн тесен кашни хăйĕн кулленхи ĕçĕн результачĕсене лайăх курса тăма пултарать.

Кашни колхозпа МТС-ра, совхозра, кашни районра кашни уйхир бригади валли çирĕп ĕç планĕсем тумалла. Ĕç планĕнче тырă вырас ĕç хăçан пуçланассине вĕçленессине палăртса хумалла. Опытлă колхозниксемпе тата агрономсемпе пĕрле, хăш тырра хăçан акнине шута илсе, хăш тырра хăçан, мĕнле тырă хыççăн вырассине кăтартас пулать. Вăрлăх участокĕсене вырса пухасси, вăрлăх материалне пĕтĕмĕшпех сыхласа хăварасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Комбайнсемпе, жнейкăсемпе тата алăпа мĕнле участоксене вырассине те тĕплĕн палăртас пулать. Малтанах, уйрăм вырăнсенче пиççе пынă май, çав вырăнсенчи тырра суйласа илсе алăпа вырмалла. Тырă лайăх пулса çитсен, комбайнсене ĕçе ямалла. Вĕсем валли чи тикĕсрех те лайăхрах тырпуллă вырăнсене уйăрса парас пулать.

Тырă вырма тытăннă хыççăн 4—5 кунран кашни колхозрах авăн çапма пуçламалла. Авăн çапнă çĕрте МТС-ăн кăткăс молотилкăсемпе те, колхозсенчи молотилкăсемпе те анлăн усă курас пулать. Кĕлтесене çĕмеле тата капана хывас ĕç çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Капана хывман тырă вырса пухнă тырă шутне кĕмест. Кĕлте кÿнĕ çĕрте ĕнесемпе тата вăкăрсемпе /анлăн усă курмалла.

Государствăна тырă парасси—колхозсен пĕрремĕш тивĕçĕ. Çак ĕçе уборкăн малтанхи кунĕсенченех тытăнас пулать. Государство кашни колхозăн уйăхсерен мĕн чухлĕ тырă памаллине график туса кăтартса панă. Çав графика кашни колхоз пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма тивĕçлĕ. Хатĕрлев пунктне тырă турттарма ятарласа бригадăсем организацилес пулать, государствăна тырă парса татиччен бригада членĕсене урăх ĕçе ямалла мар.

Государствăна тырă парас ĕçĕн ăнăçлăхĕ заготпунктсем çав ĕçе мĕнле хатĕрленнинчен нумай килет. Анчах Заготзерно Чăваш конторин директорĕ Демидов юлташ тата вырăнти Заготпунктсен директорĕсем тырă хумалли складсене юсас тĕлĕшпе паянхи куна çитсе те тивĕçлĕ мерăсем йышăнман-ха. Кунта татах пĕлтĕрхи йăнăшсем пулас хăрушлăх курăнса тăрать. Çавăнпа та хатĕрлев пункчĕсен директорĕсем, районсен руководителĕсем тырă хумалли складсене юсаса çитерес тата инçетри вырăнсенче вăхăтлăх пунктсем уçас тĕлĕшпе васкавлă мерăсем йышăнма тивĕçлĕ. Хатĕрлев пункчĕсем валли кадрсем суйласа илес ĕç çине пирĕн уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Хатĕрлев пункчĕсем патне пымалли çулсене, кĕперсене юсамалла.

Çĕрулмипе пахчаçимĕçсем пухса кĕртес тата вĕсене государствăна парас ĕçе пирĕн тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле. Наркомторгăн, Наркомпищепромăн, эрехпе крахмал завочĕсен, Маслопромпа Мясотрестăн çĕрулмипе пахчаçимĕçсем хума тата çав çимĕçсене турттарма складсемпе тарăсем хатĕрлес пулать, çĕрулми типĕтме вутă хатĕрлемелле.

Советпа çĕрĕç органĕсен руководителĕсем, совхозсемпе подсобнăй хуçалăхсен директорĕсем тырă вырас ĕç пуçланиччен тумалли мĕнпур ĕçсене, çавăн пекех тырă вырассипе тата государствăна тырă парассипе пĕр вăхăтра килекен ытти уйхир ĕçĕсене—кая юлса пулакан тырпулсене пăхса çитĕнтерес, таса çĕртмене пăхса тăрас, кĕрхи тырăсем акас, кивĕ хăмăла тăпăлтарса кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсене пурнăça кĕртсе пырасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхма тивĕçлĕ.

Колхоз хресченĕсене, МТС-семпе совхозсенче ĕçлекенсене, мĕнпур çĕрĕç работникĕсене лайăх тырпула ăнăçлăн пухса кĕртме мобилизацилемелли паха майсенчен пĕри—массăллă-политикăллă ĕç пулса тăрать. Эпир мирлĕ строительство тапхăрĕнче те, çавăн пекех вăрçă вăхăтĕнче те большевикла агитацин паха опытне туянтăмăр. Çав опытпа кăçал тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре анлăн усă курас пулать.

Çанталăк условийĕсене кура, кăçал тырă вырас ĕçе пĕлтĕрхинчен 10—12 кун каярах юлса тытăнасси курăнса тăрать. Çакă вăл ĕнтĕ пире пĕтĕм ĕçе пĕлтĕрхинчен чылай организованнăйрах тытăнса, хастарлăрах та кал-каллăнрах туса пыма хушать. Пирĕн пĕр ĕçе те йĕпе-сапаллă кĕре ямалла мар.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла шутлаççĕ: «Халĕ мĕнпур партипе совет тата хатĕрлев организацийĕсемшĕн, ялти коммунистсемпе комсомолецсемшĕн, колхозниксемпе колхозницăсемшĕн, МТС-семпе совхозсенчи работниксемшĕн тата ялхуçалăхĕнчи специалистсемшĕн тырпула пĕр тăккаламасăр, вăхăтра та тĕплĕн пухса кĕме хатĕрленессинчен, çав ĕçсене лайăх туса ирттерессинчен тата кашни район, кашни колхозпа совхоз государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли хăйсен обязательствисене тултарассинчен пахарах задача урăх çук, çакă вăл хуçалăхпа политикăллă чи пысăк задача пулса тăрать».

Тăван çĕршывăн вăй-хăватне малалла тĕреклетсе пырассишĕн ĕçлесе, Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсем государствăн çав паха задачине чыслăн пурнăça кĕртĕç.

Фашизма хирĕç кĕрешекен демократиллĕ партисен представителĕсен Берлинра пулса иртнĕ канашлăвĕ

БЕРЛИН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра тухса тăракан пур хаçатсем те, пысăк заголовоксем парса, фашизма хирĕç кĕрешекен демократиллĕ партисен представителĕсен малтанхи пĕрлешÿллĕ ларăвĕ çинчен калакан пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă:

«1945 çулхи июлĕн 14-мĕшĕнче фашизма хирĕç кĕрешекен демократиллĕ партисен представителĕсем малтанхи пĕрлешÿллĕ канашлăва пухăнчĕç. Канашлура çаксем пулчĕç: коммунистсен партийĕн Центральный Комитечĕн представителĕсем, социал-демократсен партийĕн Центральнăй Правленийĕн представителĕсем, христиан-демократсен союзĕн правленийĕн представителĕсем тата либерал-демократсен партийĕн правленийĕн представителĕсем.

Канашлура партисем пĕр-пĕринпе чунтан килĕштерсе ĕçлени палăрчĕ. Канашлура çакăн пек решени йышăнчĕç:

Гитлер Германие ку таранччен никăçан та пулман питĕ хăрушă катастрофăна кĕртсе ячĕ. Гитлерла Германи çак вăрçăшăн ответ тытма тивĕçли халĕ пуриншĕн те паллă. Германи халăхĕн анлă ушкăнĕсем, гитлеризм идеологийĕн влаçне пăхăнса, Гитлер майлă пулчĕç, вĕсем Гитлер пуçласа янă империализмлă вăрçа мĕн пĕтиччен пулăшса пычĕç. Нимĕçсем питĕ нумайĕшĕ Гитлер политикине пĕр сăмахсăр пăхăнса тăчĕç, çавăнпа та ĕнтĕ Германи халăхĕ çав политикăшăн ответ тытма чăннипех тивĕçлĕ пулса тăчĕ. Гитлер пĕтĕм нимĕç халăхне йĕркесĕрлĕхе кĕртсе ячĕ те çав тери усал ĕçсемшĕн ответ тыттармалла турĕ. Гитлер нимĕç халăхне пысăк намăса кĕртрĕ. Хамăр пурнăçа пĕтĕмĕшпех урăхлатса ярса тата пĕтĕм нимĕç халăхĕн шухăш-кăмăлне çĕнетсе ярса, фашизма хирĕç кĕрешекен демократиллĕ йĕрке туса хурсан кăна нимĕç халăхне çăлса хăварма пулать. Тăватă партин представителĕсем, кашни парти ыттисене пăхăнмасăр ĕçлесе тăрассипе килĕшсе, фашизма хирĕç кĕрешекен демократиллĕ партисен пĕртенпĕр çирĕп фронтне тума йышăнчĕç. Çавăн пек пĕрлешнĕ вăйсемпе нимĕç халăхĕ умĕнче тăракан пысăк задачăсене татса пама килĕшрĕç. Çапла ĕнтĕ, Германи историйĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланса каймалла.

Канашлу Пĕрлешÿллĕ комитет туса хучĕ. Вăл комитета тăватă партирен кашнинех пилĕкшер представитель ярассĕ. Комитет кашни уйăхрах иккĕрен кая мар лару туса ирттерет. Ыйтусене пĕрле сÿтсе-явмашкăн хатĕрлесе тăма ятарласа Çыхăну бюровĕ тунă, çав бюро кашни партин материалĕсене пĕр-пĕрне парса тăрать.

Пĕрлешÿллĕ комитет çак тĕп задачăсене пурнăçа кĕртме йышăнчĕ:

1) Германие гитлеризм юлашкийĕнчен тасатассишĕн пĕр-пĕринпе килĕшсе кĕрешмелле. Çапла ĕçлесе, Германи çĕршывĕнче фашизма хирĕç кĕрешекен демократиллĕ никĕс çинче тăракан йĕрке туса хумалла. Нацистсен идеологине, çавăн пекех тата империализмлă-милитаризмлă юхăмсене пурне те пĕтĕрсе лартасшăн кĕрешмелле;

2) Германи экономикине мĕн май килнĕ таран хăвăртрах ура çине тăратмалла, халăха ĕçсем, çăкăр апат-çимĕç тата пурăнмалли çуртйĕр тупса пама пур вăйсене те пĕрлештермелле;

3) демократиллĕ государство законлăхне туса хумалла;

4) тĕн пирки, çавăн пекех тата тĕн тĕлĕшпе тухакан шухăш-кăмăлсене хĕсĕрлемелле мар, вăл енчен пурин те пĕр тан ирĕк пулмалла;

5) тĕнчери халăхсем нимĕçсене шанма пултарччăр тесе ĕçлемелле; ытти халăхсене хĕсес шухăшпа пĕтермелле, çавăн пекех тата оккупаци влаçĕсен мероприятийĕсене чăннипех пурнăçа кĕртме хатĕр пулмалла тата нимĕçсем кÿнĕ сиене саплама хатĕр тăнине ĕçпе кăтартмалла.

Тăватă парти те хăйсем мĕнле ĕçлемелли çинчен пĕр программа йышăнма килĕшрĕç. Фашизма хирĕç кĕрешекен демократиллĕ партисен пур провинцисенчи, округсенчи, районсенчи тата ытти вырăнсенчи мĕнпур организацийĕсене те Германи хуçалăхне ура çине тăратмашкăн пĕрле ĕçлеме пĕр-пĕринпе пĕрлешме кăтартусем панă, вĕсен те тĕпри организацисем пĕрлешнĕ пекех пĕрлешмелле.

Çаксем алă пуснă: Германири коммунистсен партийĕнчен Вильгельм Пик, Вальтер Ульбрихт, Франц Далем, Антон Аккерман, Отто Винцер; Германири социал-демократсен партийĕнчен—Эрих Гнифке, Отто Гротеволь, Густав Дарендорф, Гельмут Леман, Отто Мейер; Германири христиан-демократсен союзĕнчен—Андреас Гермес, Вальтер Шрейдер, Якоб Кайзер, Теодор Штельцер, Эрнст Леммер; Германири либерал-демократсен партийĕнчен — Вальтемар Кох, Эуген Шиффер, Вильгельм Кюльц, Артур Льетенант.

ППР-па ППС-ăн ертсе пыракан органĕсен пĕрлехи ларăвĕ

ВАРШАВА, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Польша хаçачĕсем июлĕн 14-мĕшĕнче поляксен икĕ партийĕн—ППС-па ППР-ăн ертсе пыракан органĕсен пĕрлехи ларăвĕ çинчен пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: «Поляксен рабочи партийĕн (ППР-ăн) Центральный Комитечĕ тата Поляксен социалистла партийĕн (ППС-ăн) Центральнăй Исполнительнăй Комитечĕ июлĕн 12-мĕшĕнче пулнă пĕрлехи ларура, хуçалăхпа политика ыйтăвĕсене сÿтсе-явнă хыççăн, çĕршыври лару-тăру çине тата черетлĕ задачăсем çине мĕнле пăхмалли пирки калаçса татăлнă. Туслă обстановкăра пĕр-пĕрин шухăшĕсене палăртнă хыççăн, икĕ партин ертсе пыракан органĕсен малашне те пĕрлешсе ĕçлемелле тесе йышăннă тата рабочи партийĕсен задачисене сÿтсе-явас тĕлĕшпе вырăнсенче те парти органĕсене пĕрлешсе ĕçлеме сĕнес», тенĕ.

Болгарири халăх пухăвне суйлас умĕн

СОФИЯ, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Отечественнăй фронтăн Наци комитечĕ Отечественнăй фронтăн пур комитечĕсене те кăтарту панă. Вăл кăтартура халăх пухăвне (парламента) суйласси çинчен тĕплĕн каласа панă. Суйлавсене хатĕрленнĕ май Отечественнăй фронтăн Наци комитечĕ ăнлантару ĕçне анлăн туса пыма, пĕтĕм халăха производство задачисене тата правительство мероприятийĕсене пурнăça кĕртмешкĕн мобилизацилеме чĕнет. Çав ĕçсене суйлав комитечĕсем туса ирттермелле, вăл комитетсене Отечественнăй фронтăн вырăнти комитечĕсен представителĕсенчен, партисен, профсоюзсен тата ытти массăллă организацисен представителĕсенчен тумалла, вĕсене халăх пурăнакан кашни пунктрах туса хумалла. Çарта суйлава хатĕрленсе ăна ирттерес ĕçе ятарласа уйăрнă комиссисем çине хумалла. Çавăн пек комиссисем пур подразделенисенче те пулмалла. Отечественнăй фронтăн Наци комитечĕ Отечественнăй фронтăн суйлав платформине халăха ăнлантарса пама хушнă.

Австри хаçачĕ нацистла преступниксене халăх айăплама ыйтать

ВЕНА, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Грац хулинчен çапла пĕлтереççĕ: унта темиçе кун маларах Антон Ринтелен пырса вырнаçнă. Çав çын вăл халăха хирĕç тунă пăлхавсен паллă организаторĕ тата Дольфуса вĕлерекенсенчен пĕри пулса тăрать.

Австри министрĕ Эрнст Фишер çавна май «Нейес Эстеррейх» хаçатра çапла çырать: Ринтелен хура ĕçсем тата авантюристла пăлханусем тăвасшăн кăна çÿрет, ăçта тасамар ĕç тăвасшăн хăтланаççĕ, çавăн пек çĕрте ялан Ринтелен пырса тухать. Австрире малтанхи фашистсен ушкăнĕсене хÿтĕлекенни Ринтелен пулнă.

«Австрии чи усал тăшманĕ пулса тăракан Ринтелена халăх айăплама ыйтать»—тесе çырнă «Нейес Эстеррейх» хаçатра. Малалла çапла каланă: «Ринтелен пек çынсемшĕн çĕнĕ Австрире вырăн çук. Çавăн пекех тата нимĕçсен Австрире çав тери пысăк сиен кÿнĕ «Альпине Монтан» пек акционерлă обществисем те пĕтсе лармалла. Çав предприятисен акцийĕсене, нимĕçсенчен илсе, халех Австри халăхĕ аллине памалла. «Альпине Монтан», «Белерверке» тата ытти çавăн пек обществăсен пурлăхне халех халăх аллине памалла.

Бельгири политикăллă кризис

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Леопольд король вырăнтан тухма килĕшмен, халлĕхе вăл Бельгие таврăнма та шутламасть. Премьер-министр Ван Акер пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: «Павительствăн Зальцбург хулине кайнă комиссийĕ королĕ çапла пĕлтернĕ: правительство шухăшĕпе, король вырăнтан тухмасан, парламентра унăн ĕçĕсене сÿтсе-явмасăр пулас çук, тенĕ.

Король çапла йышăннă: Бельгие те таврăнмалла мар, вырăнтан та тухмалла мар. Çапла вара, татăклă, йышăнни çук. Регент правительство вырăнтан тухас тенипе килĕшмен. Çавăнпа, правительство каллех хăйĕн ĕçĕсене тума тытăнать»,—тенĕ.

Францин консультаци ассамблейĕ пе министрсем хушшинчи хирĕçÿ

ПАРИЖ, июлĕн. 18-мĕшĕ. (ТАСС). Консультаци ассамблейин июлĕн 17-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕнче делегатсем çырса панă ыйтусем çине министрсен ответ памалла пулнă. Ларăва уçнă хыççăн ассамблея председателĕ çапла пĕлтернĕ: министрсем пурте тенĕ пек тĕрлĕ сăлтавсене пула çав ыйтусем çине паян ответ пама пултараймассĕ, тенĕ. Юстици министрĕ Тетжен кăна темиçе минутран ассамблея ларăвне килме пултарать, тенĕ.

«Республика федерацийĕн» делегачĕ Робер Пимента асăрхаттарнă тăрăх, пурĕ 37 ыйту панă пулнă. Çак йĕркене ассамблея правительствăпа пĕрлешсе ĕçлеме пултартăр тесе йышăннă пулнă; анчах правительство çапла тума май килменнине кăтартса панă, мĕншĕн тесен ассамблея никама пăхăнман пуху мар, канашлакан пуху кăна пулса тăрать.

Тетжена кĕтсе ларăва чарнă пулнă. Тепĕр 20 минутран лару каллех пуçланнă. Тетжен икĕ ыйту çине ответ панă.

Антоновпа Булганин генералсене Польша орденĕсемпе наградăланă

ВАРШАВА, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Совечĕ арми генералне Н. А. Булганина «Полония Реститута» ятлă орденпа, арми генералне А. И. Антонова «Вертути мелитари» ятлă пĕрремĕш класс хĕреспе наградăланă.

Трумэн тăшманла çынсене Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен кăларса яма йышăннă

ВАШИНГТОН, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт Трумэн президент йышăннă постановление пичетлесе кăларнă. Çав постановлени тăрăх, Пĕрлешнĕ нацисене хирĕç вăрçнă государство гражданĕсене, вĕсем вăрçă вăхăтĕнче çав государствăсене пулăшса тăнă пулсан, е çав çĕршывсен государство йĕркине йышăнса тăнă пулсан, юстици министрĕ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен кăларса яма пултарать.

Вăрçă вăхăтĕнче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен 4.469 нимĕçе хăйсен ирĕкĕпе кăларса янă, халĕ тата, панă сăмаха шанса, 2.290 нимĕçе ирĕке кăларнă, вĕсенчен те хăшне-пĕрне Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен кăларса ярассĕ пулмалла. Вĕсемсĕр пусне тата Латинла Америкăран килнĕ 539 нимĕç морякĕпе темиçе нимĕçе кăларса ярасса кĕтеççĕ.

Гитлер Аргентинăна пыни çинчен калакан хыпарсем

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Чикагăри «Таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Монтевидеоран (Уругвай) çапла пĕлтерет: шанчăклă хыпарсем тăрăх, Гитлер тата Ева Браун Аргентинăна нумаях пулмасть пырса çитнĕ, вĕсем унта нимĕçсен подводнăй лодки çине ларса пынă. Хальхи вăхăтра вĕсем Патагонири (Кăнтăрти Аргентинăри) нимĕç именийĕнче пурăнаççĕ.

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Буэнос-Айресран «Ла критика» хаçатăн пĕлтерĕвне парать. Унта каланă тăрăх, Патагони полицийĕ Патагони патĕнче подводнăй лодка çинчен икĕ çын çĕр çине тухни çинчен правительствăна пĕлтернĕ. Аргентинăри ытти хаçатсенче те çавăн пек пĕлтерÿсем пичетлесе кăларнă.

ВАШИНГТОН, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Пичет представителĕсем ыйтнине хирĕç Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство департаменчĕн представителĕ çапла каланă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Буэнос-Айресри посольствине государство департаменчĕ Чикагăри «Таймс» хаçат çырнине («Таймс» хаçат Гитлерпа Ева Браун нумаях пулмасть подводнăй лодка çинчен Аргентинăна анна та халĕ нимĕçсен Патагонири именийĕнче пурăнаççĕ, тесе çырнăччĕ) йĕрлесе тухма хушнă.

Корреспондентсем çакна асăрхарĕç: Аргентина союзлă правительствăсене — тĕпĕл держависен вăрçă преступникĕсене пурăнма вырăн памапăр, тесе сăмах панăччĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Аргентинăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Амегимо çапла каланă: Аргентина правительстви Гитлер Аргентинăна пырса анма пултарасси çинчен пĕлет, ун пек хыпарсене вăл тĕрĕслет. Анчах та,—тенĕ малалла Амегимо, — çавăн пек хыпарсем чăннине пĕлтерекен нимĕнле паллă та çук.

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Аргентинăра тухса тăракан «Эль трибуно» хаçат пичетлесе кăларнă хыпара пĕлтерет. Çав хыпар тăрăх, Аргентина çывăхĕнче тата икĕ подводнăй лодкăна тытнă.

Хаçат çырнă тăрăх, çав лодкăсене Аргентина тинĕс авиацийĕн самолечĕсем хуралласа пынă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерĕве парать. Пĕлтерÿре çапла каланă: июлĕн 15-мĕшĕнче Окинава утравĕ çинче вырнаçса тăракан 5-мĕшпе 7-мĕш авиаци соединенийĕсен самолечĕсем Кăнтăр Японири хуласене, аэродромсене тата портсенче пухăнса тăнă суднăсене тапăннă. Бомбăсене пуринчен ытла Кюсю утравĕпе унтан кăнтăртарахра ларакан пĕчĕк утравсем çине пăрахнă.

ВАШИНГТОН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: американецсен 3-мĕш флочĕ ĕнтĕ виççĕмĕш хут тĕп Японие хăйне тапăннă. Акăлчансен «5-мĕш Георг король» ятлă линкорĕ тата Лăпкă океан çинчи флочĕн ытти карапĕсем те Америкăн çар карапĕсемпе пĕрле Хонсю утравĕ çинчи Хитаци районне вăйлăн персе тăнă.

Итали Японие хирĕç вăрçасси çинчен пĕлтерни

РИМ, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Итали министрĕсен совечĕн пичет отделĕ пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă: кăçалхи июлĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа, Итали Японие хирĕç вăрçать, тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство кенторин — 0—23.

НТ 00170 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. 6. 59 42 п. п. Тираж 16.000